ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

41 (4403) №, 2014, юпа, 9 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

Шупашкар 2014

## "РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ" форум йыхравлать



***Паянтан пуçласа юпа уйăхĕн 11-мĕшĕччен Чăваш Енре Пĕтĕм тĕнчери V «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум иртет. Çавна май Шупашкарта спорт мероприятийĕсем чылай пулĕç.***

***Паян сывă пурнăç йĕркине кăмăллакансем вунă сехетре Хĕрлĕ лапамра пуçтарăнĕç. Унта паллă спорт комментаторĕ Дмитрий Губерниев ирхи зарядка irттерĕ. Вун пĕрте вара Пĕтĕм тĕнчери спорт форумĕ савăнăçлă ларутăрура уçăлĕ. Спорт федерацийĕсем, спорт шкулĕсен коллективĕсем тата паллă спортсменсем парада хутшăнĕç. Вĕсем спорт талисманĕсене – Мускаври Олимпиадăн Упа çурине, 2008 çулта Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе иртнĕ Тĕнче кубокĕн Кăвакал чĕппине тата Чăваш Енĕн тĕн хулинче 2015 çулта çăмăл атлетика енĕпе йĕркелекен Европа чемпионачĕн Çăлтăрне – йăтса иртĕç. ГТО нормативĕсене пурнăçласси пĕчĕккĕн йăлана кĕрсе пырать. Савăнăçлă мероприятие пухăннисем те хăйсен вăйне тĕрĕслеме пултарĕç.***

6-мĕш стр.

ÇĔНĔ ĂРУ

## Чăваш хĕр ачи – паттăр!



Уроксем пĕтсен Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Октябрьски шкулĕн пиллĕкмĕш класс вĕренекенĕ Оля Ярисова килне васкарĕ. Ара, нумай пулмасть çичĕ уйăх тултарнă Федя шăллĕшĕн çав тери тунсăхларĕ-çке вăл! «Алăк урлă каçсанах ăна йăтса çӳ-ӳ-ӳле çĕклĕп, атте пек. Эх, пĕчĕк аллисемпе хăлаçланса ахăлтатни хама та хăпартлантарать», – шухăшларĕ вăл ăшталаннă май. Çапла хыпаланса утнă вăхăтра унăн умĕнчен кушак чупса каçрĕ.

– Чим, каснă-лартнă пирĕн мăр-мăр тĕслĕ ку! Ăçтан çапла пулма пĕлнĕ вăл. Шел, пирĕн килти икĕ кушак та пушарта çунчĕç. Хайхискерсене вут-çулăмран кăларнă пулсан паянхи кун пĕрле пурăннă пулăттăмăр, анчах вĕсем пирки шухăшлама вăхăт пулмарĕ-çке вăл кун. Юрать йăмăкăмсене унтан илсе тухма вăй çитертĕм. Виççĕмĕре те пушар хăй ытамне илнĕ пулсан... Федя шăллăма та нихăçан курайман пулăттăмăр-çке, – терĕ хĕр ача юхса аннă куççульне çанă вĕççĕпе шăлнă май.

Тĕрĕссипе, пĕлтĕрхи авăн уйăхĕнчи хăрушă куна аса та илес килмест хĕр ачан...

**Сăн ӳкерчĕкре:** Оля Ярисова.

7-мĕш стр.

ЫЙТСА ПĔЛНИ



# Ачалăх илемĕ

Шупашкар районĕнчи Ишекри вăтам шкула кĕрсе тухма яланах кăмăллă. Куçĕсем çăлтăр пек çиçекен ачасене курсан чун савăнать. Петр Михайлович Романов вĕрентекенĕн истори урокне çитес терĕмĕр хальхинче. 5-мĕш класс ачисем этемлĕх кун-çулĕнче тата этем пурнăçĕнче ĕç мĕнле вырăн йышăннине хĕрсех сӳтсе яваççĕ иккен.

«Тантăш» ачи-пăчине те вĕсен шухăшĕсем интереслĕ пулмаллах ĕнтĕ! Çавăнпа вĕренекенсене хут шăрçалама ыйтрăмăр. Турткаланса тăмасăр йышăнмалла: ачасене ĕçлеттерес ыйту çине общество çӳрĕккĕн пăхать, унăн воспитани эффекчĕ пирки питех аса илесшĕн те мар. Пурнăç тутимасине шута илекен халăх ăсĕ вара: «Ĕç тĕлне пĕлмен ачаран ӳссен путлĕ çын пулмасть», – тесех вĕрентет.

Ишек шкулĕн маттурĕсем ĕç пирки мĕн шухăшланине «Тантăш» тусĕсене пĕлтерер-ха.

***Валентин ВАСИЛЬЕВ:***

«Çын ĕççĕр пурăнма пултараймасть. Шкулта вĕренесси те ачасен – пысăк тивĕçĕ. Ĕмĕр тăршшĕпе çĕнĕ ĕçсене вĕренмелле – çакна та асра тытмалла. Хăш-пĕр чух эпĕ аннене ĕне сума та пулăшатăп. Кашни ĕçе тĕплĕн пурнăçламалла, ăна яланах вĕçне çитермелле».

***Евгения ИВАНОВА:***

«Пирĕн класра юлхав ача çук – эпир пурте тăрăшуллă. Атте-аннене эпĕ урай çуса, çулла пахчара çум курăк çумласа пулăшатăп. Хам пĕчĕк пулсан та ĕне сума килĕшет мана. Ĕçе ялан юратса та тирпейлĕн тума вĕренмелле. Килте кăна мар, шкулта та нимĕнле ĕçрен ютшăнмалла мар».

***Павел НИКИФОРОВ:***

«Кашни çыннăн ĕçлемелле, тăрăшуллă пулмалла. Шкултан таврăнсан чей ĕçетĕп те кил картине тухатăп. Малтан пăрăва шăвăратăп, унтан картишне тирпейлетĕп. Кайран ташă кружокне каятăп. Ташласси – тринкки-траньkки сикни мар: вăл та йывăр ĕç, çичĕ хут тар кăларать. Кружокран киле таврăнсан урок тума ларатăп».

***Екатерина ПЕТРОВА:***

«Хам пирки: «Эпĕ ĕççĕр пурăнаймастăп», – тесшĕн. Килте аннене урай çуса пулăшмалла, пӳрте те тирпейлемелле. Вак-тĕвек тупăнсах тăрать. Атте-анне мĕн хушнине итлетĕп, пурнăçлатăп. Эпĕ мĕнле тăрăшнине курать те анне – канфетпа сăйласа хавхалантарать. Пирĕн класра пурте ĕçлеме юратаççĕ, ушкăнпа тем те тума хатĕр эпир. Асанне мĕн вĕрентнине те яланах асра тытатăп: «Пĕр ĕçе пĕтермесĕр теприне ан пуçла!» – тет вăл. Манăн шухăшпа тĕнчери пур этем те ĕççĕр пурăнмасть».

***Арианна АНДРЕЕВА:***

«Шкултан таврăнсан эпĕ кил-çурта тирпейлетĕп. Анне ĕçре чух апат та пĕçеретĕп. Пăрăва тухса шыв ĕçтеретĕп, ĕне те сăватăп. Çăла шыв ăсма çӳресси питĕ килĕшет мана. Хитре шухăшсем пуçа кĕреççĕ. Хăйне пулăшнăшăн анне мана лăпкаса илет, пылак çимĕçпе хăналаса савăнтарать. Шăмат кун ташă кружокне çӳретĕп, унта та тăрăшмалла. Тар тăкмасăр хитре ташлаймастăн! Ĕç çын пурнăçĕнче пĕрремĕш вырăнта тăрать».

***Ксения РОМАНОВА:***

«Килти ĕçсене юратсах пурнăçлатăп. Урай тата чашăк-тирĕк çăвасси кашни хĕр ачан тивĕçĕ тесе шухăшлатăп. Анне çине пăхатăп та – мĕн пултарнă таран ăна пулăшас килет. Шкулта та ĕççĕр лармастпăр эпир. Вĕренӳ хăех аслă ĕç. Лайăх паллăсем илни пирĕн тăрăшулăха кăтартать. Вĕреннипе пĕрлех класри чечексене шăваратпăр, урай çăватпăр, шкул картинче те тăрăшатпăр».

Çакăн пек хуравларĕç Ишек шкулĕн маттурĕсем. Ачасене тĕрĕс воспитани парас тата ачасене ĕçлеттерес текен ыйту ансат мар. Пĕтĕм тĕнчери конвенцие те йышăннă ку тĕлĕшпе. Парадокс та пур ку ыйтура. Ача-пăчана йывăр ĕçрен хӳтĕлесси пирки калакан шухăша вĕсене ĕçлеттерме юрамасть тенĕ пек ăнланаççĕ нумайăшĕ. Паллах, ун пек мар. Анчах ахаль ĕçĕн сумлăхĕ обществăра пĕтсе пырать – кăна йышăнмаллах.

Ишек шкулĕнче 5-мĕш класра вĕренкен хастарсем вара çак ыйтура пĕр шухăшлăн пулчĕç. «Шкул ачисен пурин те ĕçе хăнăхмалла, хал çитекен ĕçрен ютшăнса тăмалла мар. Ĕç ăс-тăна, чун-чĕрене аталантарма пулăшать. Кашни ĕçре тăрăшулăх кăтартмалла. Тăрăшулăх вара кашни ачана илем кӳрет. Ĕç – ачалăх илемĕ!» – çакăн пек пĕтĕмлетӳ турĕç Валентин, Евгения, Павел, Екатерина, Арианна, Ксения.

Эсир мĕн шухăшлатăр?

***Владимир СТЕПАНОВ.***

ХАЛАП ХАПХА ТĂРРИНЧЕ

# Аннене хăратни

*Борис ЖИШКОВ*

Анне пасара кайма пуçтарăнчĕ.

– Алăка çекĕлпе çаклат. Вăрă-хурах килсе тухасран шикленетĕп, – терĕ.

Эпĕ мĕн хушнине тумарăм. Анне хапхаран тухсанах кивĕ мунчала шыраса тупрăм. Ăна арпаштарса пăтраштартăм та янах çумне çыхрăм. Чăн-чăн сухал пекех!

Унтан кăмакари кăмрăкпа сăмса айне мăйăх ӳкертĕм. Пуçа аттен кивĕ майккине тăхăнтăм. Тĕкĕртен пăхрăм та чутах тӳнсе каймарăм. Епле хăрушă курăнатăп!

Çенĕке тенкел, юнашар пĕр мăшăр кăçатă лартрăм. Аттен вăрăм тăлăпне уртса ятăм, алла кĕтесре выртакан патака тытрăм та тенкел çине хăпартăм.

Нумай кĕтрĕм. Тинех илтетĕп – анне килет. Алăка хăлăпĕнчен туртрĕ те лешĕ яриех уçăлса кайрĕ. Çенĕкре мана асăрхасан тăпах чарăнчĕ.

Патака çĕклерĕм те:

– Эпĕ – вăрă-хурах! – терĕм.



Анне самантрах кулса ячĕ.

– Ан суй-ха. Саша-çке эсĕ, – терĕ те мана тенкел çинчен антарчĕ. – Фу-у, епле хăратрăн!

Çинçе сасăран çеç палласа илнĕ-ха ĕнтĕ вăл мана. Каламасть кăна.

Кайран вара:

– Урăх капла ан хăтлан, – терĕ-ха. Апла тăк – чăнах та хăратнă эпĕ аннене.

***Вырăсларан Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.***

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР тивĕçĕсене пурнăçлакан – Г.А.МАКСИМОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1693 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 3854
Пичете юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# «Шан хăвна, – каларĕ Пĕлĕт. – Пурнăçланĕ санăн ĕмĕт!»

***Кашни ача мĕн çинчен те пулин ĕмĕтленет. Çапла пулмалла та вăл. Хăйĕн пуласлăхне çутă та таса куракансем çав тĕллевпе çунатланса пурăнма тытăнаççĕ. Кашнин шухăшĕ расна, çапах вĕсене пĕр япала çыхăнтарать: пурнăçра хăйĕн вырăнне тупма ăнтăлни. Кирек епле професие суйласан та ăна чунтан пурнăçлани пĕлтерĕшлĕрех-çке.***
***Вăрнар районĕнчи Асăмçырми шкулĕн вĕренекенĕсем те хăйсен утас çулне палăртса хунă. Пурин те ĕмĕчĕсем пархатарлă. Кĕçĕн классенче çеç вĕренеççĕ пулин те пысăк çын пекех шухăшлаççĕ вĕт!***

## Ир те каç пире сыхлать полици

Тăваттăмĕш класри чи хастар та маттур ачасенчен пĕри – Олег Николаев. Шкул çулне çитиччченех парта хушшине ларма ĕмĕтленнĕскер пĕрремĕш класа пуринчен малтан çитнĕ! Пĕлÿ илес туртăмĕ мĕн тери пысăкçке. Лайăх вĕренекенскер ÿкерме те ăста, çынсене тата ялти илемлĕ вырăнсене хут çине питĕ хитрен сăнласа парать. Çапах та вăл ÿнерçĕ мар, полици ĕçченĕ пулма ĕмĕтленет. Ашшĕ пек.

– Полици çыннисен харсăр пулмалла. Кашни вак-тĕвекрен шикленмелле мар. Çапăçма тата пăшалтан пеме те пĕлмелле, – паха енсене пÿрне хуçлатса шутлама тытăнчĕ Олег.

Хăйне пĕрре те хăравçă тесе калас килмест те... Анчах арçын ача йытăран шикленет. Пĕррехинче ăна пĕри ыратмаллах çыртнă çав, халĕ те манăçмасть. Апла пулин те Олег аптăраса тăмасть, чуна пусăрăнтаракан туйăма çĕнсе йытăсемпе ытларах хутшăнма тăрăшать: ачашлать, тутлă çимĕçпе сăйлать, пĕрле выляять. Ара, полицире ĕçлес туртăм пысăк-çке!



Олег кахалланма юратмасть, ирех тăма та йывăр мар ăна. Ултă сехет çитсенех вăранса каять, вырăн çинче йăраланса выртмасăр тÿрех сиксе тăрать те ирхи зарядкăна пуçăнать. Чупассипе те маçтăр вăл. Класра ăмăртсан иккĕмĕш тухать. Эстафетăсене те хутшăнма кăмăллать. Тĕрлĕрен вăйăсенче хастарлăхпа палăрать. Кĕнекепе туслăскер Николай Носов калавĕсене вулама юратать. Ахăртнех, унăн сăнарĕсен çаврăнăçулăхĕ тата тем те пĕр шухăшласа кăларма пĕлни килĕшет ăна.

– Илья Муромец пек пуласчĕ! – тет Олег паттăр пек курăнма хăтланса. Тем пекехчĕ. Чăваш «Муромецĕпе» хамăра та шанчăклăрах пулĕччĕ.

## «Эпĕ асамçă пулас тăк...»

Иккĕмĕш класри Женя Долгов та полицире вăй хурасшăн. Сирена кăшкăртса пыракан машинăсене питĕ кăмăллать иккен вăл, хăй те кама та пулин çăлма е вăрă-хураха тытса чарма кайнă чухне çавăн пек вĕçтерсе пырасшăн.

Чăнах та, çар çынни пулатех ĕнтĕ Женьăран. Хытă чупать вăл, спортăн ытти тĕсĕпе те туслашасшăн.



Çирĕм пĕр хутчен пĕр канмасăр отжимани тăваканскер яланах малтисен ретĕнче пулма ĕмĕтленет. Ĕçлеме ăна нихăçан та ÿкĕтлемелле мар – хăех кăмăлтан пурнăçлать.

– Эпĕ асамçă пулас тăк ытларах ĕçлĕттĕмччĕ тата машинăпа çÿрĕттĕмччĕ, – тет Женя ĕмĕтлĕн. Ашшĕ те, амăшĕ те руль тытма пĕлеççĕ, ывăлĕ те вĕсенчен юласшăн мар ĕнтĕ.

## «Тепĕр тракторĕ – ман валли!»

– Ÿссе çитсен эпĕ тракторист пулăп. Пирĕн килте икĕ хурçă ут ларать. Пĕринпе атте ĕçлет, тепри вара мана кĕтет, – пĕлтерчĕ Валера Николаев хăйĕн çирĕп шухăшне. Тракторист ĕçĕ мĕн тери пĕлтерĕшлĕ пулнине ăнланать иккĕмĕш класс ачи. Ял пуласлăхĕ çинчен халех шухăшлама тытăннăскер ĕмĕтне пурнăçлантарасшăнах.

Физкультура урокне Валера кашнинчех савăнăçлăн сиккеле-сиккеле чупать. Унта тĕрлĕрен хускану тумаллаçке. Вырăнта питех ларма юратман ачасене вара çакă кăна кирлĕ. Кунта чун каниччен выляма тата çан-çурăма çирĕплетме пулать. Валера турникпа туртăнса çĕкленме



те юратать. Çакна вăл хăйĕнчен аслăрах Владимир Николаевран вĕреннĕ. Вăт çапларах пăхаттир ÿссе çитсен Чăваш Ен хирĕсенчи усă курман çĕрсене тракторпа самантрах сухаласа тăкĕ.

## Эмел пур аптекăра – Юрă сиплĕ чунăра!



Настя Никифорова юрă-кĕвĕ предметне пуринчен те ытларах килĕштерет. Унăн чун киленĕçĕ вĕт-ха ку! Амăшĕ çинчен те, юмахри сăнарсем пирки те юрлать вăл, ыттисене хаваслăх парнелет. Хĕр ачана ялти Культура çуртĕнче иртекен уявсене час-часах чĕнеççĕ. Унăн сасси пахчари илемлĕ кайăксенни пек, чуна сиплет. Аппăшĕ Наташа та çак киленĕçпе «чирлĕ». Çавăнпа пĕртăвансем пĕр-пĕрне яланах хавхалантараççĕ.

Çынсене ырă çеç сунакан Настя аптекарь пулма ĕмĕтленет. Пĕр-пĕр чирпе нушаланакансене эмелпе тивĕçтересшĕн вăл, ыратнине хăвăртрах иртterме пулăшасшăн. Анчах унччен нумай кĕтмелле. Çавăнпа та хальлĕхе хĕр ача çынсене юрăпа та пулин çăмăллăх тата лăпкăлăх кÿресшĕн, чун-чĕрине усал шухăшсенчен сиплесшĕн.

## Тухтăр ĕçĕ сăваплă

Пĕр-пĕр уяв çывхарса пынă чухне тăваттăмĕш класри Таня Пигасева вĕтkелет кăна.

– Хаçат кăлармалла! Мĕнлерех хатĕрлемелле-ши ăна хальхинче? Ыттисене те ку ĕçе явăçтарас, – тесе тÿрех ĕçе пуçăнать.



Юлташĕсем нумай унăн. Хĕр ача хăй те ыттисене ялан пулăшма хатĕр. «Çăкăр-тăвар хире-хирĕç», – теççĕ халăхра. Çавăнпа ăна тантăшĕсемпе килĕштерсе ĕçлеме пĕрре те йывăр мар.

Маттурскер алăран кĕнеке ямасть, унта нумай çĕнни тата кăсăкли пĕлме пулать-çке. Çапах Таня амăшне пулăшма та вăхăт тупать: ĕнене киле илсе килет, вылльăх пăхать... Чĕр чунсене питĕ юратать вăл. Вĕсене хăвалamалла чухне хулăпа хăратать çеç, çапмасть.

Таня çитĕнсен тухтăр пуласшăн, çынсен сывлăхĕшĕн яваплăх илесшĕн. Ĕмĕчĕ пурнăçлантăр тесен халех тăрăшма пуçламаллине туять, çавăнпа шкулта лайăх вĕренет.

Ĕмĕтлĕ çын – çунатлă. Çавăнпа та, ачасем, ĕмĕтпе вĕçме ан хăрăр. Шанăр, ĕненĕр, сирĕн шухăш-тĕллевĕр пурнăçланатех!

**АВТОР сăн ÿкерчĕкĕсем.**

# Хĕвел, кил! Сулхăн, кай!

Килте пĕччен хăварас мар тесе анне мана Çемен піччесем патне леçсе ячĕ.

– Ĕçрен таврăниччен лар-ха кунта. Кăнтăрла иртсен килсе илĕп. Васкавлă ĕçсемпе района кайса килмелле-ха, – тесе хăпăл-хапăл тухса кайрĕ.

Çемен пичче çав тери çирĕп кăмăлласкер. Пули-пулми çынпа çăвар уçса калаçмасть, кулнине вара пĕрре те курман эпĕ ăна. Яланах ăмăр çанталăк пек çўрет. Çавăнпа анне тухса кайсанах кăмака çумĕнчи диван çине вырнаçрăм. Сывлама та хăрамалла пек туйăнчĕ çав самантра. Ара, пĕр сăмах та чĕнмест. Мана асăрхамарĕ пулĕ тесе ура çине тăрса сиккелесе илтĕм. Усси пулмарĕ. Куç хĕррипе те ман çине пăхмарĕ. Сасартăк сăпкари ачи йĕрмĕшме тытăнчĕ, вăл вара çаплипех пĕр хускалми сенкер экран умĕнче киленет. Шăпăрлан хăйне алла илменрен-ши пушшех çухăрашать. Унăн сассине пула хăлха çурăлса тухать пулĕ терĕм.

– Çемен пичче, Танюша вăраннă! – терĕм хыттăн çеç.

Çук, çаврăнса та пăхмарĕ вăл. Ах, тарăхрăм! Ара, пепки сăпкаран тухса ўкесрен хăраса ўкрĕм тата! Аптăранă енне унпа юнашар пырса лартăм. Пўрнепе хулпуççинчен тĕртсе:

– Эсир ыйхăран вăранăр-ха, тархасшăн, – терĕм асăрханса.

Эккей, йăшăл та тумарĕ.

– Мĕн каласа чĕрине ыраттармаллаши пĕрех хутчен, – тесе сăвă йĕрки шухăшлама тытăнтăм.

– Çемен піччин вак ачасем.
Çиме çăкри çук,
Касма çĕççи çук,
Хутма вутти çук,
Кўлме лаши çук,
Сума ĕни çук, – терĕм кĕнекери сăвва аса илсе.

Кăн! пăхрĕ ман çине Çемен пичче. Хура çўçне аллипе якаткаларĕ те ўсĕрсе илчĕ. Унтан ахăлтатса ячĕ.

– Ну, Лисук, артистран та артист эсĕ! Эс çапла юптарасса ĕмĕрне те шухăшламан. Ара, çиме çăкăр пур пирĕн. Чăнах. Çĕççине те ăна касма туяннă. Эсĕ ларнă çĕрте шăнтăн-им? Хутма вутти çук тетĕн те. Е тата сĕт ĕçес килчĕ-им? Атя апла сарайне, иккĕн ĕне сăвар, – ахăлтатрĕ хайхискер çаплипех.

Ух, Çемен пичче-не çакăн пек кулнине пурнăçра пĕрремĕш хут куртăм. Ăна çапла калаçтарма пултарнăран çав тери хĕпĕртерĕм.





Пире чăкăт памасан
Ĕне сĕтне типĕттĕр;
Пире çăмарта памасан
Чăххин тирри сĕвĕнтĕр.

Анчăк варĕнче хĕвел пăхать,
Пирĕн патра хĕвел пăхмасть.
Хĕвел, кил, кил!
Сулхăн, кай, кай.





– Микуль епле пурăнать?
– Микуль çапла пурăнать:
Тунти кун тунсăхлать,
Ытлари кун ыйхăлать,
Юн кун юнăхлать,
Кĕçнерни кун кĕвĕçет,
Эрне кун эрленет,
Шăмат кун шăмарать,
Вырсарни кун выртать.

Ултă кăвакал улăхра,
Çичĕ тăрна тăр шывра,
Ача-пăча пăрçара,
Пирĕн Валя сăпкара
Утя, утя, утя, утя!

Элиза ВАЛАНС (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

ҪĔНĔ КĔНЕКЕ

# Ҫулсăр ҫӳрекен лашине ҫухатнă

Вăрмантан вăрăм, курăкран лутра. Мĕн-ши вăл? Ҫук, вĕрен мар. Юрĕ-ҫке, нумай аптăратмăп сире. Тупсăмĕ – ҫул. Этем ĕмĕрĕнче унăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Ахальтен мар-тăр пурнăç ҫулĕ тетпĕр. Таçта та илсе ҫитерет вăл пире. Анчах нихăçан та пĕр тикĕс пымасть: пĕрре яка, тепре лакăм-текĕмлĕ, хушăран ҫип пек ҫинçе, тепĕр чухне питĕ аслă, сарлака. Чи кирли – хăв сукмакунтан пăрăнмалла мар. Апла ан пултăр тесен ăçта каймаллине, еплерех тĕллев пурнăçлама палăртнине пĕлмелле. Унсăрăн аташасси те часах. «Ҫулсăр ҫӳрекен лашине ҫухатнă», – тесе ахальтен каламан чăвашсем. Урхамахĕсĕр кăна юлсан юрĕччĕ-ха. Чун канăçлăхне ҫухатас, ырăлăх пирки вуçех манас хăрушлăх пысăк.

Ҫакăн пек тарăн шухăша Михаил Мерченĕн «Вĕçсĕр ҫул» (редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Наталья Васильева; тиражĕ – 1000 экземпляр) кĕнеки путарчĕ пире. Кăларăма кĕçĕн ҫулхи ачасем валли ҫырнă ҫирĕм ҫичĕ сăвă кĕнĕ. Вĕсем ачасене тăван тавралăхпа паллаштараççĕ, йывăрлăхсене ҫĕнтерме, ырăпа усала уйăрма, туслăха упрама вĕрентеççĕ. Сăвăç илемлĕ те сăнарлă ӳкерчĕксем тăвать, ҫавна май ҫут ҫанталăк хитрелĕхне асăрхама хистет. М.Мерченĕн уйăхĕ те, хĕвелĕ те, чечекĕ те – йăлтах чĕрĕ. Сăмахран:

Хĕвел кулать тӳпере.
Кунĕ ăшă, ҫилĕ ҫук.
Савăнса чун-чĕререн
Вылямашкăн питĕ чух.

*«Пĕве хĕрринче».*

Хĕвелпе уйăх ытти сăвăра та («Ытарма ҫук хитре», «Сăпка юрри») тĕл пулаççĕ. Паллах, ăнсăртран мар ку. Вĕсем Ҫĕре ҫутă парнелеççĕ, эппин, умри ҫула та ҫутатаççĕ, этеме телей пиллеççĕ.

Ҫул сăнарĕ те сăвăран сăвва куçать:

Шыв пек мар-и такăр ҫул,
Юхать-юхать – вĕçĕ ҫук.

*«Таксипе».*




Ҫутă кĕмĕл ҫулпала
Шав пыратпăр малалла.

*«Килĕ ăçта-ши?»*

Ҫулпала пырать Куçук,
Ҫулăн вĕçĕ ҫук та ҫук:
Умра – ҫул,
Хыçра – ҫул,
Сукмакран пуçланчĕ вăл.

*«Вĕçсĕр ҫул».*

Ҫапла, пурнăç ҫулĕ анлă, интереслĕ пулăмсемпе пуян. Унăн пуçламăшĕ вара – асамлă ачалăхра. Лирика сăнарĕсем илеме чунпа та чĕрепе туяççĕ. Ăна аркатасран шикленеççĕ. «Кĕрхи илем» сăвăри Рита ҫулçăсем ҫине пусма та хăрать. Ытла илемлĕ-ҫке-ха вĕсем, епле таптăн?

Кулăшла ӳкерчĕксем те тĕл пулатăн кĕнекере. Тĕслĕхрен, шăна слон пулма тĕв туни («Шăна мĕншĕн нăрлатать?»), йытă уйран ҫара уран таврăнни («Ҫара уран»), куян упа патне «каçару ыйтма» пыни («Вĕçкĕн куян»), така урипе тапатапа кĕнеке вулани («Такмаксем»).

«Шурă парăс» сăвă вара йывăрлăхсене – тĕрлĕ ҫил-тăвăла, хумсене – парăнмасăр малалла талпăнма хистет:

Парăс, парăс, харсăр парăс!
Эпир тивĕç вĕренме.
Эсĕ вăйлă – пире пар ăс,
Хĕн килес тĕк – ҫĕнтерме.

Ҫӳлерех каланине тепĕр хут аса илтеретпĕр – ҫул нумай, анчах эсир хăвăрăнне суйлăр. Чăрмавсем чарса ан тăччăр сире, вĕсем хавхалану ҫăл куçĕ пек пулччăр. Лашăра ҫухатсан та пуçăра ан усăр. Унсăр пуçне пуйăс та, машина та пур. Хумсене парăнтарас тесен карап ҫине ларма билет туянăр. Тепĕр тесен, йытă кӳлме те пулать. Чи пĕлтерĕшли – ҫурма ҫулта ан чарăнăр. Умра ҫут ҫăлтăр-ĕмĕт кĕтет-ҫке-ха.

САВĂНĂÇ

# Туслă ҫемьере ҫитĕнни – хăех телей




Ҫемье – ачалăх сăпки. Кил-йышри хутшăнусен ҫирĕплĕхĕпе ҫепĕçлĕхĕнчен ывăл-хĕр еплерех ҫитĕнесси нумай килет. Тен, тĕппипех тесессĕн те тĕрĕс пуль. Ашшĕ-амăшĕ, пиччĕшĕ-аппăшĕ ҫине пăхса е пархатарлă, е сиенлĕ тĕслĕх илет шăпăрлан. Ырăпа усала ҫивĕч туйсассăн та, ҫапах мĕн тĕрĕссипе йăнăшшине тĕппипех палăртма пĕчĕкрехха вăл хальлĕхе. Ҫавăнпа тӳнтерле ĕçсем тăвассинчен, кăнттам сăмах персе ярассинчен асăрханмаллах.

Ҫемье мулран та, чапран та хаклă. Ҫывăх ҫынсен ăшши хуйха-суйха мантарать, шанăç парать. Аслă тĕнче сиввĕн кĕтсе илсессĕн те тăван кил яланах хапăл пире. Ахальтен мар-тăр: «Аттепе анне пулсассăн пуринчен те эп пуян», – тесе шăрантарать юрăç.

Нумай пулмасть Чăваш кĕнеке издательствинче 1500 экземплярлă тиражпа Альбина Юратăвăн «Туслă ҫемье» (редакторĕ – Ольга Иванова, ӳнерçи – Наталья Васильева) кĕнеки кун ҫути курчĕ. Вун тăватă сăвă кĕнĕ унта. Вĕсемпе паллашнă май куç умне кĕçĕн ҫулти ачасен шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ-туйăмĕ уççăнах тухса тăрать. Лирика геройĕ хĕвел пек ăшă кулăллă, савăк кăмăллă, чечек пек илемлĕ. Мĕншĕн тетĕр-и? Урăхла пулма пĕлменрен.

Телей – канфет мар, ăна кĕсьере пытарса усрамалла мар, ыттисемпе пайламалла. Ҫакна лайăх ăнланаççĕ кĕнекери сăнарсем:

Савнăçпа тапать чĕрем,
Ҫут шевлен чунна кĕрем.
Ҫăлтăрсем унта ҫутатăп,
Кăмăла санпа пайлатăп.

*«Ҫĕкленӳллĕ кăмăл».*

Мĕншĕн савăнать-ха шăпăрлан? Ку вăрттăнлăха «Шанăçпа тулатăп» сăвă уçса парать: кунĕ илемлĕ, анне чĕри хĕвеллĕ, тăван ял илĕртӳллĕ, ҫĕр-шыв тĕреклĕ пулнишĕн.

Аслисем пĕчĕккисене ĕçе хăнăхтараççĕ. Арçын ачасемпе хĕр ачасем ҫĕннине хапăлласах йышăнаççĕ:

Кукаçи, санпа ирех
Эп те тухăп пахчана.
Кахалланмăп эп текех,
Мухтасам хăв мăнукна.

Кукаçи, тавах сана,
Вĕрентетĕн ĕçлеме.
Чечекленĕ пуш ана,
Курса савăп илеме...

*«Кукаçи».*

Ҫитĕннисем ырми-канми тăрмашнине питĕ лайăх ăнланаççĕ, кураççĕ маттур ачасем. Ҫавăнпа хăйсем те вĕсем пек пулма тăрăшаççĕ:

Юрататăп аннене,
Мухтанап унпа чунтан.
Пулăшатăп аннене,
Тирпейлетĕп кил-ҫурта.

*«Юратнă аннеçĕм».*

«Туслă ҫемье» – ҫутă та илемлĕ кĕнеке. Наталья Васильева ӳкерчĕкĕсем те, Альбина Юрату сăввисем те чунри чи ăшă та черченкĕ туйăмсене вăратаççĕ, кăмăла ҫĕклеççĕ. Кулленхи пурнăçра шкулта та, урамра та, килте те ҫĕр тĕрлĕ ăс параççĕ, тем тума та хăнăхтараççĕ пире. Анчах чылай чухне чи кирлине манса хăвараççĕ, ун пирки никам та асăнмасть. Ку вăл – савăнма, пур япалапа пулăмра та илеме курма вĕрентесси. Тĕрлĕ ĕç-пуça мĕнле йышăнасси хамăртан килет-ҫке-ха. Пуçа усса ҫӳрени никама та ăраскаллăрах тумасть. Эппин, мĕншĕн пустуй пăшăрханмалла, тарăхмалла? Альбина Юрату сăввисенчи хĕвеллĕ сăнарсем пек пулмалла.

«Кукашшĕ-кукамăшĕ, ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкĕсене пулăшма яланах хатĕр. Хаваслă пулма нумай та кирлĕ мар. Чăн та, туслă ҫемьере ҫитĕнни – хăех телей», – тенĕ аннотацире. Ку сăмахсемпе килĕшмелли ҫеç юлать.

Страницăна Ольга АВСТРИЙСКАЯ (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.

1-мĕш стр.

# "РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ" форум йыхравлать




Пĕтĕм тĕнчери çуран утмалли кун Раççейре паян пуçласа старт илет. **Вун икĕ сехетре** Хĕрлĕ лапамра вун пилĕк пин ытла çын утма тухать. Пĕтĕм тĕнчери çуран утмалли кун Пĕтĕм Раççейри ачасен «Орленок» центрĕпе (Анапа) тата Сочири Олимп паркĕпе видеоконференци йĕркелет.

Çак вăхăтрах «Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи» пысăк уяв пуçланать. Вăл Хĕрлĕ лапамра **вунултă сехетчен** пырать.

**Вун виçĕ-вун сакăр сехетсенче** Карл Маркс урамĕнчи тĕп лапамра «Спорт бульварĕ» ĕçлĕ. Кунта эстафетăсене, хусканулла вăйăсене хутшăнма, спорт аэробикипе хатĕрленме тата ГТО нормативĕсене пурнăçлама пулĕ.

**Вун тăватă сехетрен пуçласа вун çичĕ сехет те вăтăр минутчен** халăх Хĕрлĕ лапамра «Спорт – пурин валли те» фестивальте савăнĕ – спортăн урамри, экстремаллă, наци тата çамрăксен тĕсĕсемпе йĕркеленĕ кăтартуллă физкультура программипе паллашĕ.

Çĕнтерӳçĕсене **вунултă сехетре** Хĕрлĕ лапамра чыслĕç.

## Ăсталăх класĕсем кĕтеççĕ

Форумпа килĕшӳллĕн Шупашкарта спортăн уйрăмшар тĕсĕпе ăсталăх класĕсем иртĕç. Вĕсене пĕрлештернĕ командăсен тĕп тренерĕсем, Раççейĕн тава тивĕçлĕ тренерĕсем, Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери федерацисен представителĕсем ертсе пырĕç.

Ăсталăх класĕсем спортăн çак тĕсĕсемпе иртĕç: триатлон, ирĕклĕ кĕрешӳ, çăмăл атлетика, адаптаци спорчĕ, сĕтелçи теннис, самбо, спорт гимнастики, конькипе илемлĕ ярăнни.

Программăна теори тата практика пайĕсем кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, триатлон валли Чăваш Енĕн Спорт министерствин акт залĕнче 50 метрлă бассейн уйăрнă. Малтанах спорт комплексĕпе паллашма тӳр килĕ. Унтан темиçе лекцие пулнă хыççăн практика ĕçĕ бассейнра иртĕ.

Çавра сĕтел хушшинче Грецири, Иранри тата Польшăри Fila ăслăлăх комиссийĕн уйрăм çыннисем сăмах илĕç.

## Шупашкарта çак кун мĕнле паллă çынсене курма пулĕ?

Çак кун ытти паллă спортсменсене те тĕл пулма тӳр килĕ. Çавăнпа та спорт уявне çитсе курма васкăр!



*Евгений Редькин – совет тата белорус биатлонисчĕ, Олимп тата тĕнче чемпионĕ.*



*Николай Валуев – Раççей боксерĕ, РФ Патшалăх думин депутачĕ.*



*Федор Емельяненко – самбо, дзюдо тата бокс тĕсĕпе чи лайăх кĕрешӳçĕ. ММА (çар искусствин тĕрлĕ енлĕхĕ) тĕсĕпе тăватă хутчен чемпион ята илнĕ – Раççей мăнаçлăхĕ!.*



*Татьяна Лебедева – Раççей çăмăл атлечĕ, вăрăмăшне сикессипе тата виççĕлле сикессипе ĕçлет. Унăн рекорчĕсем: 7,33 метр вăрăмăшне сикни, 15,34 метр вăрăмăшне виççĕлле сикни.*

## Спидскейтинг енĕпе ЧР Кубокĕн финалĕнче çĕнтерчĕç



Çĕнĕ Шупашкарта А.Г. Николаев ячĕллĕ стадионта спидскейтинг (ролик конькипе хăвăрт чупасси) ЧР Кубокĕн финалĕ иртрĕ. Унта республикăри чи вăйлă 50 спортсмен хутшăнма кăмăл тунă. Ăмăртăва йĕркелесе иртterekenĕ – ЧР конькипе чупас спорт федерацийĕ.

Спортсменсене икĕ дистанцие кура хакларĕç: 100 тата 200 метр, 100 тата 400 метр. Шупашкарти 55-мĕш шкулти 3-мĕш класра вĕренекен Дарья Охринкина 61,69 очко пухса пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Унăн аппăшĕ Эвелина, çак шкултах 7-мĕш класра вĕренекенскер, аслăрах ӳсĕмрисен ушкăнĕнче 3-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Шкул администрацийĕ, класс ертӳçисем тата пĕрле вĕренекенсем пĕртăвансене саламлаççĕ, малашне те ăнăçу сунаççĕ. Маттурсем!

*Анастасия БАГАДЕРОВА.*

## Мускав районĕн чысне хӳтĕлĕпĕр

Нумаях пулмасть Шупашкарти 3-мĕш лицей Мускав районĕнчи шкулсен 10-11 классен хастарĕсене пуçтарчĕ. Кунта черлидинг конкурсĕ иртрĕ-çке! Спорт ташши-хусканăвне сăнама куракансем нумай пуçтарăнчĕç. Конкурс вăхăтĕнче кашниех хаваслă кăмăл-туйăмпа пуянланчĕ.

Пĕтĕмлетӳ вăхăтне пурте чăтăмсăррăн кĕтрĕç. Пирĕн 3-мĕш лицей командине çитекен пулмарĕ, вăл ăсталăхпа пултарулăхне кăтартса 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форумра эпир чи лайăх пилĕк команда йышĕнче Мускав районĕн чысне хӳтĕлĕпĕр. Çĕнтерӳ пирĕнпех пуласса шанатпăр!

*Ксения АНТОНОВА.*



## Çăмăл атлетикăпа – виççĕмĕш

Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хатĕрленнĕ май иртнĕ эрнере Элĕкре çăмăл атлетика кросĕ иртрĕ. Унта пирĕн шкул команди те хутшăнчĕ. Районти пур шкул та хастар, вăйлă. Çавăнпа ăмăрту, пĕр градус сивве пăхмасăрах, питĕ хĕрӳ иртрĕ. Пирĕн шкул виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Уйрăмах çак маттурсене мухтас килет: вун пĕрмĕш класри Руслан Николаев иккĕмĕш, Наташа Николаева виççĕмĕш, тăххăрмĕш класри Артур Михайлов виççĕмĕш вырăнсем йышăнчĕç.

Çĕнтерӳçĕсене пылак парнесемпе тата Хисеп хучĕсемпе чысларĕç.

*Тоня МИХАЙЛОВА.*

Элĕк районĕ,
Питĕшкасси шкулĕ.

1-мĕш стр.

# Чăваш хĕр ачи – паттăр!



## Пĕррехинче, сĕм-тĕттĕм каç...

...Каç енне ашшĕпе амăшĕ, Михаил Федоровичпа Лариса Владимировна, тăванне илме Шупашкара кайма пуçтараннă.

– Ачамсем, эпир каялла часах таврăнăпăр. Кĕçех Ирина аппăр ачисемпе пирĕн пата килĕ. Пĕрле мунчара çăвăнса тасалăр та выртса çывăрăр. Хăрама кирлĕ мар. Эсĕ, Оля, кĕçĕннисене пăхкала, куçран ан вĕçерт, – асăрхаттарса хăварнă вĕсем аслă хĕрне.

Тутлă мунчара рехетленнĕ хыççăн йăмăкĕсем валли выçăн сарнă Оля. Хăй вара садике çӳрекен Эльза çумне йăпшăннă, Лена тепĕр пӳлĕме вырнаçнă. Ĕшеннĕ ачасем самантрах ыйха путнă.

Пӳртре тем япали хыттăн шаплатнипе вăранса кайнă Оля. Куçĕ умĕнче вутçулăм алхаснине курсан шикленсе ӳкнĕ. Çăвара сĕрĕм-тĕтĕм кĕнине пула чыхăнса кайнă. Пур пĕрех çухалса кайман тăваттăмĕш класс ачи. Юнашар выртакан Эльзăна йăтса Лена патне васканă.

– Лена! Лена! Тăр-ха хăвăртрах, тăр! Çунатпăр! Пушар! – тесе хыттăн кăшкăрнă.

Вăранасшăн пулман йăмăкĕ. Оля вара ăна лăскама тытăннă. Лешĕ ыйхă тĕлĕшĕпех ура çине тăнă та аппăшĕ хыççăн картише чупса тухнă. Хапха патне çитсен çеç хăйсемпе мĕн пулнине тавçăрса илнĕ те макăрса янă.

– Эсир манран ан юлăр! Эпĕ маларах Ирина аппа патне çитсе инкек пирки пĕлтерем! – тесе Оля малалла çил пек ыткăннă.

Виçĕ пĕр тăван кĕрхи сивĕ каç çывăрмалли кĕпе-йĕмпе тата çарран пылчăк тăрăх чупнă. Тавралăх тĕттĕм пулнăран сукмак ăçта вырнаçни те курăнман. Тĕрлĕ лакăмра такăнса ӳкнĕ, хăвăрт сиксе тăнă та малалла ыткăннă. Пач тĕттĕм çанталăкра çил пушшех вăйланнă, таврари йывăçсем кашланисĕр пусне урăх нимĕн те илтмен пĕр тăвансем. Пĕчĕк Эльза юлашкинчен макăрсах янă.

– Эпĕ ывăнтăм! – тесе йĕрмĕшнĕ.

Пылчăкпа вараланса пĕтнĕ Лена йăмăкне йăтнă та аппăшĕнчен юлас мар тесе хыпаланнă...

## Пурте кар тăрса

Хашăлтатса пырса кĕнĕ Оля тăванĕсем патне. Лешсем, мунча хыççăн çывăрма хатĕрленнĕскерсем, хĕр ача çара уран иккенне, çӳçне-пуçне те пуçтарманнине курсан, вĕсен килĕнче мĕнле те пулин хăрушă ĕç пулнине самантрах ăнланса илнĕ. «Ах, тулĕк мĕнши?!» – шухăш çиçĕм пек вĕçсе иртнĕ.

– Ирина аппа! Пирĕн çурта вут тивнĕ-ĕ! Пулăшă-ă-ăр! – тенĕ Оля куççулĕпе чыхăнса.

Ку хыпар вĕсемшĕн пуçран темпе çапнă пекех пулнă. Калас тенĕ сăмахĕ те пыра пӳлĕннĕ. Вара çиçĕмле хăвăртлăхпа урамалла тухса чупнă... Каярах Ленăпа Эльза çитнĕ. Оля сиксе чĕтрекенскерсене ыталаса илнĕ те пушшех ĕсĕклеме тытăннă.

– Хам вăхăтра вăранман пулсан пурте çунса вилеттĕмĕр-çке-е-е! – тенĕ чĕтренсе тухакан сассипе.

Кĕçех ял урамĕ çынсем кăшкăрнипе, шавланипе тулнă. Пурте Ярисовсен çурчĕ еннелле чупнă. Пĕрисем сарайĕнчи выльăх-чĕрлĕхе урама кăларассишĕн ăнтăлнă, теприсем вут чĕлхине парăнтарас тесе кар тăрса тăрăшнă. Çур çĕр иртсе иккĕре çеç лăп-лантарнă вĕсем хĕрлĕ «автана».

## Шурă çӳçлĕ, кăвак куçлă пуканесемпе кушаксем те кĕлленнĕ

Тепĕр кунне аслисемпе килне кайса пăхма тĕв тытнă Оля. Çунса хуралнă пӳрт ăш-чиккине пăлханса кĕрсе тăнă вăл. Çавăнтах чунĕ сӳ! тунă унăн. Йăсăрланса выртакан тӳшеке курсан:

– Эх, çĕнĕ пӳртри çĕнĕ япаласемпе нумай та усă кураймарăмăр. Питĕ шел, – тенĕ чунне хытарса.

Унччен пуканесем ларакан вырăн та пуш-пушах пулни чĕрине ыраттарнă.

– Вĕсем пирĕн нумайччĕ. Шурă çӳçлĕ, кăвак куçлă теттесем те йăлтах çунса кĕл купине çавраннă. Шел, упраса хăвараймарăмăр. Çакăн пек инкек пуласине маларах пĕлнĕ пулсан-и? Пӳрте те урăх çĕрелле тĕртсе лартнă пулăттăм, – тесе çунăк япаласем урлă кулянса утса çӳренĕ вăл.

Пĕр кĕтесре çунса пĕтеймен кушак тирне курнă, тăпах чарăнса тăнă вара. Урисене такам тăлласа лартнă пек. Унтан макăрсах янă.

– Пĕсукăмсем! Пĕсукăмсем! Мĕн тăвас ĕнтĕ халĕ манăн? Мĕн тăвас? Калăр-ха, Пĕсукăмсем! Урăхран сирĕнпе пĕрле каçсерен ыталанса çывăраймастпăр ĕнтĕ. Эсир пурнăçран уйрăлнăшăн хама айăплă туятăп... Анчах май пулмарĕ сире çăлма, май пулмарĕ. Каçарсамăр, – хӳхленĕ хайхискер кулянса.

Çак синкерлĕ ĕç хыççăн темччен тĕлĕкри пек çӳренĕ Оля. Инкеке лекнĕ çемьене пĕр поселение кĕрекен çичĕ ял халăхĕ, вĕрентекенсен коллективĕ, ачасем пулăшнă. Укçапа та, тумтирпе те. Пурăнма вара тăванĕсем патне куçнă Ярисовсем.

Кăшт вăхăт иртсен Оля тарăн шухăша путнă.

– Хам тунă паттăрла ĕçшĕн паянхи кунччен тĕлĕнсе пĕтерейместĕп. Тĕрĕссипе, эпĕ паттăрах-ши? Юратнă кушаксене çăлса хăвараймарăм-çке... Ун чухне юрать çухалса кайса, йăмăксем пирки мансах, урама пĕччене чупса тухмарăм. Унсăрăн пирĕн киле мĕн тери пысăк хуйăх йăтăнса аннă пулĕччĕ. Çурт çуннисĕр пуçне Ленăпа Эльзăн пурнăçĕсем таталатчĕç... Ах, кун пирки шухăшлас та килмест. Хам та вăранайман пулсан? Аттепе аннешĕн ĕмĕрлĕх пысăк суран пулатчĕ... Апла пулсан пирĕн пурăнмаллах-ха ку çĕр çинче, – тенĕ пĕррехинче.

## Мускава – тивĕçлĕ парне илме

Хастар Ольăна Мускава чыслама йыхрав тунă. Ăна унта планшет, Диплом, кĕнекесем тата «Пушар вăхăтĕнчи паттăрлăхшăн» медальпе хавхалантарнă. «Орленок» лагере кайма путевка пани пушшех хăпартлантарнă хастар та хăюллă хĕр ачана.

– Паттăр... Чăваш хĕр ачи – паттăр! Епле лайăх янăрать ку сăмах, э! Маттур эсĕ, Оля! Сан пек ачасем кирек епле вăхăтра çухалса кайманни пире савăнтарать те. Тен, ӳссен çăлавçă пулăн? Татах та усăллă ĕçсем тăвăн, – тенĕ ăна унта хавхалантарса.

Сăпайлă хĕр ача вăтанса çеç:

– Кун пирки шухăшласа пăхмалла-ха. Тен, эсир калашле чăнах çак профессие суйласа илĕп те, – пулнă çакнашкал хурав.

Аякри хуларан мĕн тери хăпартланса таврăннă Сĕнтĕрвăрри хĕр ачи! Ĕнтĕ паттăр ачасем пирки кĕнекесем тупса вулама тытăннă, сенкер экранпа та çавăн йышши çамрăксем пирки документаллă фильмсем пăхнă.

– Тĕрĕссипе çынна пулăшасси – кашнин тивĕçĕ. Йывăр вăхăтра нихăçан та пĕр-пĕрне пăрахмалла мар. Пулăшмалла, нимрен хăрамалла мар! – пĕтĕмлетнĕ вăл паттăрсем çинчен çырнă кĕнекесене тишкернĕ май.

## Кĕпепе çуралнăскерсем

Унтанпа шăп та лăп пĕр çулталăк иртнĕ. Ĕнтĕ Ярисовсен çемйи, ырă кăмăллă çынсем пулăшнипе, çĕнĕ çурта куçнă.

– Чĕрере ытарма çук ырăлăх капланăвĕсемпе пĕрле темĕнле хурлăх, пăшăрханулă савăнăç пур. Ара, халăх пулăшăвĕпе çĕнĕ пӳрте куçрăмăр-çке. Тавах пурне те. Пире инкекре ăнланса алă панăшăн, – терĕ пиллĕкмĕш класс хĕр ачи.

– Çав иртнĕ вăхăта эпĕ ĕмĕрне те манас çук. Ун чухне сĕм-тĕттĕм каç Оля аппаран юлас мар тесе йăмăка çавăтса чупрăм. Анчах вăл пĕчĕкскер час ывăнчĕ. Ăна, йывăрскере, йăтрăм. Пылчăк тăрăх утнăçемĕн йывăç турачĕсем урана чĕрсе ыраттарчĕç. Нумаях та каяймарăмăр, темрен такăнса таçта çитиех сирпĕнсе кайрăмăр. Хуралса-вараланса пĕтрĕм пулин те каллех Эльзăна йăтса малалла чупрăм. Йăмăк макăрать.

– Алă та, ура та ырата-ать! – тет ниçта кайса кĕреймесĕр.

Анчах ăна ниепле те йăпатма хал çитерейменрĕм, мĕншĕн тесен ун чухне хам та ни вилĕ, ни чĕрĕччĕ. Çав каç пирĕншĕн, Ольăшăн, Эльзăшăн тата маншăн, иккĕмĕш çуралнă кун пулчĕ. Çапах та, кирек мĕн каласан та, кĕпепе çуралнă ахăртнех эпир. Аппана, аппана тем пысăкăш тав сăмахĕ калатăп, – калаçăва хутшăнчĕ иккĕмĕш класра пĕлӳ илекен Лена.

...Хăйсен урамне кĕрсен çăкăр тĕпренчĕкĕ сăхакан çерçи ушкăнĕ шавлăн чĕвĕлтетнине илтрĕ Оля. Лешсем вара унран хăраса йывăç çине пăрр! хăпарса ларчĕç. Турат çинче пĕр-пĕринчен çăкăр татăкне туртса илессишĕн тапаçланнине тимлĕн сăнарĕ те ахăлтатса ячĕ.

– Кур-ха! Эпир пĕчĕкрех чухне Ленăпа çапларах хăтланаттăмăр. Пĕр-пĕр теттешĕн мăкăртатса илеттĕмĕр. Эй, тем пайлайман ĕнтĕ. Халĕ пысăкланнă эпир. Апла хăтланмастпăр. Туслă пурăнатпăр. Тата та хăпартлантаракканни Федя шăллăм пур. Вăл пирĕншĕн çуркунне шăтса тухнă хитре çеçке! – тесе Оля хăйсен пӳрчĕ еннелле хыпаланчĕ.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА.*
Сĕнтĕрвăрри районĕ,
Октябрьски шкулĕ.

**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕнче:** Оля аппăшĕн паттăрлăхĕнчен паянхи кун та тĕлĕнме пăрахаймасть Лена йăмăкĕ.

# «Пурнăç темĕнле йывăр пулсан та юрăпа çăмăлрах пек туйăнать...»



**Çуралсанах юрлама пуçланă пулĕ вăл. Халĕ те çынсем ăна курсан: «Пурнăçна юрласах ирттеретĕн-çке», – теççĕ. Чăнах та çапла.**

Полина Мартимиановна Константинова юрăç-педагог сассине Чăваш радионе итлекенсем тата унăн концерчĕсене çӳрекенсем пин-пин сасăран та уйăрса илĕç. Чунтан шăрантаракан йĕркесене кашнин чĕри патне çитерет вăл. Канаш районĕнчи Кăшнаруйĕнче çуралса ӳснĕскер тăван тавралăх илемне туйса ăна çепĕç юррисемпе татах хитрелетме шут тытнă пулинех.

Шкула çӳреме пуçласан вĕрентекенсем хĕр ачан пултарулăхне тӳрех асăрханă. Çапла вăл хорта юрлама тытăннă, концертсене хутшăннă. Каярах Канаш педучилищинче вĕреннĕ вăхăтра та ăна талантне кура пĕр мероприятирен те хăварман.

– Пурнăç темĕнле йывăр пулсан та юрăпа çăмăлрах пек туйăнать. Вĕсем пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерме пулăшаççĕ, – тет Полина Мартимиановна. – Эпĕ Яковлев ячĕллĕ педуниверситетран музыка факультетĕнчен вĕренсе тухрăм. 1-мĕш курс хыççăн драмтеатрта конкурс пулчĕ, питĕ нумай çынран 16-шне суйласа илчĕç пире. Романенко преподаватель сĕннипе Саратова кайрăм. Анчах унта каярах çитрĕм çав, экзамена ĕлкĕреймерĕм. Сасă лайăххине кура тепĕр çул килме каларĕç. Тĕрлĕ сăлтава пула унта вĕренме каймарăм, хамăр педуниверситетрах музыка факультетĕнче пĕлӳ илтĕм.

Полина Мартимиановна яланах ачасене çывăх пулма тăрăшать. Кĕçĕннисем те ăна юратаççĕ. Садикре воспитатель тивĕçне пурнăçланăскер «Шкул ачин пӳлĕмĕнче» те ĕçленĕ. Филармоние куçсан ăна шкул ачисемпе ĕçлемелли лекторине юрлама илнĕ. Полина Мартимиановна Константинова шкулсене ятарлă программăпа çӳреме пуçланă. Пултаруллă çынна яланах асăрхаççĕ вĕт-ха. Часах юрăçа «Çавал» ушкăна чĕнсе илнĕ.

– Икĕ çул ĕçленĕ хыççăн пăрахма тиврĕ – манăн ачасене ӳстермелле вĕт-ха. Унта пĕрмаях гастрольсене çӳремелле. Маншăн вара çемье пĕлтерĕшлĕрех. Ачасем яланах пĕрремĕш вырăнта пулмалла. Çапла шухăшласа эпĕ Çĕнĕ Шупашкарта Ача-пăча керменĕнче ĕçлеме пуçларăм.

Пĕррехинче «Химик» Культура керменĕнче Н.Эриванов композитор «Сăрнай» ансамбль пуçласа ярассине пĕлтернĕ. Çавăнта вăл П.М. Константиновăна та чĕннĕ. Полина Мартимиановна ун патĕнче вокал ансамбльне ертсе пыма пуçланă.

Анчах тепĕр вăхăтран тăван енпе сыв пуллашса Красноярска тухса кайма тивнĕ. Ку хула Шупашкар пекех пĕчĕк. Унта ĕç тупма та йывăр. Çапах та чăваш юрăçине кунта та ăнăçу куç хĕснĕ. Хăна çуртне вырнаçсан вăл юнашар питĕ чаплă кермен ялтăртатса ларнине асăрханă, унта кайса пăхма шут тытнă. Комисси П.М. Константиновăн сассине итлесе пăхма кăмăл тунă. Вăл «Казах вальсĕ», «Юрату ахрăмĕ», Людмила Сенчина репертуарĕнчи «Вак чулсем» юрăсене шăрантарсан кермен директорĕ ăна çав кунах концерта хутшăнма чĕннĕ.

– Эпир чăвашсем яланах килĕшме хăнăхнă вĕт. Каçхине концерта кайрăм. Юрларăм. Тепĕр кун кермен солистки пулса тăтăм. «Эсир ăçтан?» – тесе ыйтаççĕ манран. Шупашкар çинчен унччен пачах илтмен иккен вĕсем. Директорĕ те ман çинчен пĕлтернĕ чухне: «Ялтăран килнĕ», – тесе каланă, – çав вăхăта ăшă кулăпа аса илет юрăç.

Нумай та вăхăт иртмен, Полина Мартимиановнăна демонстрацие хутшăнма, диктор пулма ыйтнă. Чăвашсем мĕн тери маттур иккенне курса тĕлĕннĕ çавăн чухне Красноярск çыннисем. Чăваш юрăçне пула çав хулара Георгий Ефимовпа Григорий Хирбю юррисем янăрама тытăннă. Вырăссене ăнланмалла пултăр тесе Полина Мартимиановна юрăсен вĕçĕнчи икшер куплетне вырăсла куçарса шăрантарнă. Куракансене питĕ килĕшнĕ.

– Виçĕ çул пурăнтăмăр çавăнта, кайран Шупашкара таврăнтăмăр. Мана турри каялла чăваш çĕрĕ çине илсе килчĕ. Апла пулсан эпĕ кунта кирлĕ. Килтĕм те писательсем патĕнче пропаганда бюровĕнче ĕçлеме пуçларăм. Унта солист-йĕркелӳçĕ пулса тăтăм. Çыравçă-кулăш ăсти, баянист тата эпĕ – виççĕн çӳреттĕмĕр çапла концерт лартса.

П.М.Константинова çыравçăсемпе тачă çыхăну тытать. Çакăншăн вăл чăннипех те савăнать. Ку вара мĕнле пуçланнă-ха? Петĕр Ялгир сăвăç Литература музейĕнче çыравçăсен юбилей каçĕсене ирттерессине йĕлана кĕртнĕ. Кашни юбилее ирттерме юрăçтусне чĕннĕ. Кайран Полина Мартимиановна «Тантăш», «Хыпар», «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатсемпе те туслашнă, вĕсемпе пĕрле районсене тухса çӳреме пуçланă. Çапла вара ачасене валли хăйĕн ятарлă программине хатĕрленĕ. Кĕçĕннисем ăна яланах ăшшăн йышăнаççĕ, юррисене юратса итлеççĕ. Çакăн пек программа шкулсенче питĕ кирлине вĕрентекенсем те ăнланаççĕ.



Хисеплĕ юрăç-педагог, музыка обществин тава тивĕçлĕ деятелĕ, А.Талвир ячĕллĕ литература премийĕн лауреачĕ, Г.Хирбю ячĕллĕ конкурс-фестивалĕн дипломанчĕ Полина Мартимиановна Константинова çуралнăранпа çак кунсенче 65 çул çитрĕ. Эпир ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр, малашне те ăнăçу сунатпăр!

***Лариса ПЕТРОВА.***

# Вилор Чекмак



*(Малалли. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте.)*

Йытă минутранах Федор пиччен кутамккипе телогрейкине çĕклесе таврăнчĕ.

– Ого-го-го! Сан йыттунтан тарса пытанма çук! Манăн кабинет çинчен отрядра никам та пĕлмен!

«Федоренко кабинечĕ» – чул айĕнчи пĕчĕк хăвăл. Кĕмелли выраннe плющ (хăмла евĕр курăк) хупласа илнĕ, мĕнле пытармалли пирки пуç ватмалла та мар.

Хуларан партизансене хĕç-пăшалпа тивĕçтерекен килсе çитрĕ. Уçланкăра Мусана курчĕ те чарăнчĕ.

– Сирĕн ушкăн валли те кунта темĕн пур-ха. Суйлăр. – Улăмпа брезента (хулăн пир) сирсен винтовкăсемпе патрон ешчĕкĕсем курăнса кайрĕç.

– Райкомра вара сирĕнтен пĕрне ăшă япаласем парса ячĕç... Чекмак валли. Амăшĕ ывăлĕшĕн кулянать.

Вилор тĕркене мĕн чикнине тавçăрма хăтланнă вăхăтра Ральф хуравне тупрĕ. Япаласене шăршласа пăхрĕ те арçын ачан тумтирне палласа хўрине савăнăçлăн вылятма тытăнчĕ. Вилор тĕркене салтрĕ. Унтан мамăк тирлĕ çĕлĕк, ватник тата юратнă канфечĕсене кăларчĕ. Йăл кулчĕ.

«Анне, анне! Эсĕ çаплах мана пĕчĕк ача вырăнне хуратăн: канфет парса янă вĕт! Мамăк тирлĕ çĕлĕк тата... Кирлех-ши?»

Вилор курăк çинче выртакан ăшă япаласем çине пăхрĕ те Мускав çывăхĕнчи сивĕ кĕркунне çинчен шухăшлама тытăнчĕ. Эх, çак япаласене халь ашшĕне парсанччĕ! Кунта вара, Крымра, ăшă-ха... Мĕнлеши вăл унта, ашшĕ? Хўтĕлеве ăçта хутшăнать-ши? Клин патĕнче-и? Тен, Серпухов районĕнче? Карттă тăрăх калас пулсан, тăшманăн Мускава çитме хĕрĕх çухрăм çеç юлнă.

## Çĕнтерÿ хыççăн тĕл пулăпăр

Карттă çинче симĕспе палăртни – уртăш тата йĕплĕ кўкен иккен. Шăпах вĕсем урлă сукмак выртать.

– Ман хыççăн, Ральф!

Нушалантаракан тĕмсем часах вĕçленчĕç. Анчах малта – базальт катрамĕсем, вĕсем хыççăн вара чуллă тўрем сăрт пуçланать. Чулсем хушшинче Вилор аран палăракан сукмака асăрхарĕ – вăл çўлелле ертсе хăпарать.

– Хăпариччен канса илер-ха. Кăштах çырткалани те пăсмĕ.

Арçын ача кутамккине уçса çăкăр татăкĕ кăларчĕ, çуррине Ральфа пачĕ.

– Акă мĕн, юлташăм, çак чăтлăхран тепĕр хут шуса тухмалла пирĕн. Сана пĕлместĕп те, анчах эпĕ хамăр ăçтан тухнине ас туса юлаймарăм.

Кирлĕ çĕре кун вĕçленнĕ вăхăта çеç çитрĕç. Сукмакĕ Симферополь-Севастополь шоссе çине илсе тухрĕ. Çўлтен хула питĕ лайăх курăнать. Чим-ха, тăшман бомбардировщикĕсем хĕвел енчен пырса бомба пăрахса хăвараççĕ, унтан тинĕс енне çаврăнаççĕ. Зенитлă тупă сасси илтĕнмест, анчах вĕсем çапăçăва тухни унта та кунта çулăм хыпса тухнинчен паллă.

...Лаборатори лапамне палласа илме çук. Çуртăн чўречисене çапса аркатнă, йĕри-тавра мĕн пуррине ишĕлтерсе антарнă, стенисене те ватнă. Трамвай рельсĕсене туртса кăларнă, ўпĕннĕ икĕ вагонран тĕтĕм йăсăрланать. Çывăхрах брезентпа хуплануă япала выртать. Вилор пырса пăхрĕ те... «Кусем... вĕлернисем вĕт-ха!» Çан-çурăма сивĕ çапрĕ. Камши унта брезент айĕнче? Тен, лайăх пĕлнĕ çынсемех? Намăс пулсах кайрĕ: кунта, хулара чăн-чăн вăрçă пырать. Вĕсем патĕнче вара, вăрманта, питĕ лăпкă...

Вилор чупса иртекен арçын ачана чарчĕ.

– Вăйлах сирпĕтрĕç-и?

– Ах, мĕн пулса иртмерĕ-ши! Тўперен мĕнле кĕрĕслетрĕç – вагонсем çапла çаврăнса ўкрĕç: аманнисене пĕр сехете яхăн турттартăмăр... Кашни кунах бомба сирпĕтеççĕ!

Вокзал урлă Вилор Ленин урамне тухрĕ. Партин хула комитетне çитмесĕрех скверта матроссене курчĕ – вĕсем маршпа утаççĕ. Командирĕ хушу парать:

– Сулахайпа! Сулахайпа! Сулахайпа!.. Вĕттĕнвĕттĕн мар!

Моряксем тип çĕр çапăçăвĕсене хатĕрленеççĕ пулас.

* * *

Сакăр уйăхран «юнкерсем» Панорама çине фугас бомбисем пăрахрĕç. Çурт çунма тытăнчĕ.

* * *

Хула комитечĕн вестибюлĕнче винтовкăллă арçын ача çула пўлчĕ.

– Пропуск (кĕмелли документ) кăтартăр!

– Эпĕ пакетпа.

Часовой йытă çине пăхрĕ.

– Халех пĕлтерĕп... Ирт. Ку Ральф-и?

– Ральф.

– Эпĕ ăна пĕлетĕп. Вăл пирĕн шкула килнĕччĕ.

– Мĕнлине?

– Эпĕ пĕрремĕшĕнче вĕренетĕп. Çиччĕмĕш класра.

«Авă епле! – шухăшласа илчĕ Вилор. – Караула тăратма аслă классенче вĕренекенсем юлман иккен».

Вăл инструктор кабинечĕ патне пычĕ. Алăкĕ уçă. Калаçни илтĕнет:

– Мĕн тăвайăп-ха эпĕ? Севастополь çыннисем хулана пăрахса каясшăн мар!

– Эсĕ ăнлантар.

Вилор кабинета кĕчĕ.

– Сире пакет пама хушрĕç.

Акă вăл урама тухрĕ, килĕ енне васкаса утрĕ. Анчах сăрт çине хăпарсан кĕтесри вичĕ хутлă çурт умĕнче, мĕншĕнне хăй те ăнланмасăр, чарăнчĕ. Кулса илчĕ. Кунта Гава кинеми пурăнать-çке! Вăл ансăр картлашкапа чупса анчĕ те алăкран шаккарĕ. Анчах Анисья Федоровна каçхи сменăна кайнă иккен, ирхине çеç таврăнать. Халĕ вăл Инкерманра ĕçлет.

Килне çитсен арçын ача алăка васкаса уçрĕ – пĕтĕмпех хăй вырăнĕнче. Таса та тирпейлĕ. Анчах пур пĕрех темĕн çитмест. Халь кăна ăнланчĕ вăл: амăшĕсĕр хваттер те пушă. Япаласене чĕрĕлĕх кĕтĕр тесен кунта амăшĕн пулмалла. Анчах вăл курăнмасть. Отряда пырса панă çыруран паллă: амăшĕ ирех тухса каять те каçпа çеç таврăнать – Севастополь патĕнче траншея чавать.

Вилор чўрече каррине уçрĕ те пўлĕмре çутă пулса кайрĕ. Сĕтел çинче виç кĕтеслĕ çыру выртать. «Вилор Петрович Чекмака», – тенĕ унта. Арçын ача ăна хыпаланса уçрĕ.

*«Ывăлăм! Эпĕ тĕп çарта тăратăп. Мĕн пулмалли пулчĕ ĕнтĕ. Кунпа танлаштарсан Испани – хатĕрленмелли вырăн пек çеç. Гитлер пире вилмеллех таптарăм тесе шухăшлать. Анчах эпир пуç касакансен аллисене вăйсăрлататпăр-ха... Ĕненетĕп, çĕнтерÿ пирĕнпе пулĕ.*

*Мĕнле эсĕ унта, хаклă ывăлăм? Хăвна та, аннўне те упра. Лайăх вĕрен. Тăван çĕр-шыва сыхлама санăн та черет çитсен вара чĕрў мĕн хушнине ту. Чĕрў вара санăн, ывăлăм, – эпĕ чунтанах ĕненетĕп – тĕрĕслĕхле, тивĕçлĕ тата паттăр.*

*Сывă пул! Çĕнтерÿ хыççăн тĕл пулăпăр».*

Вилор ашшĕн çырăвне ытараймасăр пăхса тăчĕ те типтерлĕн хуçлатрĕ. Сĕтел сунтăхĕнчен «Ырă ĕçсен журналне» туртса кăларчĕ. Çак тетраде вăл хăйĕн вăрттăнлăхĕсене уçса паратчĕ. Акă нумаях пулмасть çырни те пур: *«Ырра юратас тесен усала пĕтĕм чĕререн курайми пулмалла. Нимĕç çыравçи Вольф коммунист çапла калать».*

Вилор кăранташ тытса çавăнтах хушса хучĕ: *«Фашиста çапса тăкасси – чи пысăк ырăлăх!»* Унтан тетрадьрен пĕр хутне туртса кăларчĕ те: *«Аннеçĕм, каçар. Кĕтсе илеймерĕм»*, – тесе çырчĕ, сĕтел çине хурса хăварчĕ.

– Каймалла, Ральф.

Йытă пĕтĕмпех ăнланчĕ. Урайĕнчен кутамкка илчĕ те Вилора пырса пачĕ. Арçын ача пўлĕме тепĕр хутчен пăхса çаврăнчĕ.

Çĕнтерÿ хыççăн тĕл пулăпăр!

## Чўк уйăхĕн 18-мĕшĕнчи каç

Вилорпа Ральф тарăн мар путăкра вырăн тупрĕç. Кунта нўрĕкрех, анчах кĕрхи çил лекмест. Сăнаса ларма та аван! Çапах каç çывхарса пынă май куçран ытларах хăлха çивĕчлĕхĕ кирлĕ. Ральфа шанмалла ĕнтĕ. Анчах Вилор иккĕленмест те, нимĕçсем каçхи ултă сехет хыççăн çапăçмаççĕ.

Алсури юлашки каç. Ирхине отряд тухăçа кайĕ. Вара – сывă пул, Севастополь, сывă пулăр, паллаНисем, тăван вырăнсем! Каллех хула аса килчĕ – юлашки хутчен курнă чухнехи пек...

Ральф сисчĕвленчĕ.

– Эсĕ мĕн? Такам пуррине туйрăн-и? – арçын ача йытта ачашларĕ. Анчах Ральф лăпланмарĕ. Хăлхисем туртăнчĕç. Вилор бинокльтен пăхрĕ. Вăл çав тери тимлĕ сăнанăран инçетре темĕн хускалнă пек курăнма тытăнчĕ. Тĕмсем-ха ĕнтĕ...

– Ку мĕлкесем ăçтан тупăнчĕç-ха вара? Шăпрах, Ральф, шăпрах. Эпĕ те асăрхарăм. Мĕн пулма пултарать-ши вăл?.. Çынсем! Вĕсем пост енне каяççĕ вĕт! Ральф, малалла! Отряда!

Йытă тĕм енне чупрĕ, анчах ăна нимĕç пульли тĕп турĕ. Малалла пĕччененех ĕçлемелле. Фашистсем икĕ теçеткерен те ытларах. Вилор малтан пĕр енчен пăшалтан перет, унтан тепĕр çĕре чупса çитет те каллех перет. Сасартăк патронсем пушанчĕç. Мĕн тумалла? Кĕсьере вичĕ граната пур. Малтан пĕрне ывăтрĕ. Кăкарта тем ыратнине туйрĕ, мĕншĕнне ăнланмарĕ.

– Тăван çĕр-шывшăн! Севастопольшĕн! – тесе кăшкăрчĕ те иккĕмĕшне те тăшман енне пăрахрĕ. Хул пуççине темĕн çивĕчскер ыраттарчĕ, сулахай алли хускалма пăрахрĕ. Фашистсем хăйĕн таврах пуçтарăнсан вара, тăн çухатма пуçланине туйрĕ пулин те, виççĕмĕшне те сирпĕтрĕ... Çапла Вилор Чекмак хăй те пĕтрĕ, анчах нумай фашиста тĕп турĕ, отряда çăлса хăварчĕ.

*Михаил ЛЕЗИНСКИЙĔН*
*«Пурăн, Вилор!» повеçĕнчен.*

● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП

## Çупа маринадланă уплюнкка

**2 килограмм уплюнкка валли 1 стакан шыв, 100 грамм тип çу, 2 кашăк çурă 9 процентлă уксус, ыхра, укроп, 1 апат кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

Кăмпана çӳп-çапран тасатса лайăх çăвăр. Савăта хурса тăвар сапăр, унтан çупа тата уксуспа хутăштарнă шыв ярăр. Çулăм çине лартăр та çур сехет тытăр.

Кĕленче тĕпне вĕтетнĕ ыхрапа укроп хурăр. Хыççăн вĕреме кĕнĕ кăмпана тултарăр. 15 минут стерилизацилĕр те хупкăчка лайăх хуплăр.

## Тăварланă хыр кăрăçĕ (рыжики)

**Çимĕçе хатĕрлеме хăвăра кирлĕ чухлĕ хыр кăрăçĕ, ыхра, хĕрен çулçи, укроп, тăвар илĕр.**

Кăмпана лайăх çуса тасатăр. Кĕленчене пĕр хĕрен çулçи, пĕр ыхра шăлĕ ярăр. Унтан кăрăça сийпе хурăр, кашни сий хыççăн тăвар сапăр. Çиеле – укроп, ыхра тата хĕрен çулçи.

Çимĕçе йывăр япалапа пусарттарса 2 кун тытăр. Вăхăт иртсен савăта хупкăчпа хупласа сивĕ вырăна лартăр. 5 кунран кăмпа хатĕр пулать.

## Маринадланă майра кăмпи

**1 килограмм вĕтĕ майра кăмпи, 1-2 пуçлă сухан, 20-30 пĕрчĕ çаврака пăрăç, 2 лавр çулçи, 2 гвоздика, 1 стакан 3 процентлă уксус, 1 чей кашăкĕ сахăр, 1 апат кашăкĕ тăвар кирлĕ.**

Кăмпана тăвар хушнă шывра 20 минут пĕçермелле. Дуршлага хурса юхакан шывпа чӳхемелле.

Пĕр стакан шыва, вĕтетнĕ сухана, сахăра тата тăвара хутăштарса çулăм çине лартмалла та вĕреме кĕртмелле. Унтан кăмпана ярса 10 минут тытмалла. Хыççăн уксус хушмалла.

Вĕри çимĕçе савăтăн иккĕ виççĕмĕш пайĕ чухлĕ тултармалла. Маринад ямалла. Капрон хупкăчпа хупламалла. 2 эрнерен кăмпа хатĕр.

**Кĕркунне – кăмпа вăхăчĕ. Çак çимĕçе кăмăллакан чылай ахăртнех. Кăмпана кайсан çакна асра тытма ан манăр: çамрăккисене, вăтам тата вĕтĕ шлепкеллисене çеç суйлăр. Хуртланнине ан илĕр. Кăмпа час пăсăлать. Ăна çийĕнчех пĕçермелле, унсăрăн çимĕç юрăхсăра тухать. Кăмпана хĕле валли пĕлсе тĕрĕс хатĕрлесе хăвармалла. Ун чухне вăл чылай вăхăт пăсăлмĕ.**



## «Кăмпа ухати» солянка

**Çимĕç валли 2-3 килограмм купăста, 1 килограмм кишĕр, çавăн чухлех помидор, пуçлă сухан, 2-3 килограмм пĕçернĕ кăмпа (мĕнлине ытларах кăмăллатăр), çур литр тип çупа Краснодар соусĕ, 3-5 лавр çулçи, 1 стакан сахăр, 1 чей кашăкĕ хура пăрăç, 5-8 гвоздика, 1 апат кашăкĕ уксус эссенцийĕ, тăвар илĕр.**

Купăстана улăм пĕрчи евĕр, помидорпа сухана çавракан, кăмпана вĕтĕ турăр. Кишĕре корей теркипе хырăр. Пĕтĕмпех хутăштарăр та тип çу, сахăр, тăвар ярăр. Çулăм çине лартăр. Час-час пăтратса 30-40 минут пăшăхлăр. Унтан кăмпа хушса тата 30-40 минут тытăр. Хыççăн соуса, уксус эссенцине, ытти япалана ярса тепĕр 10-15 минут пĕçерĕр. Хатĕр çимĕçе стерилизациленĕ кĕленчене вĕриллех тултарса хуплăр.

Кунсăр пуçне кăмпана шăнтса тата типĕтсе хатĕрлеме пулать.

● СЫВЛĂХ

## Кĕркунне мĕнле апат çисен лайăххах?



Çулталăкăн йĕпе-сапаллă çанталăкĕ пуçланчĕ. Çак вăхăтра пирĕн организм хĕллехи сивĕсене кĕтсе илме хатĕрленет, вăй-хал пухать. Кун тăршшĕ кĕскелсе пынипе, çанталăк палăрмаллах сивĕтнипе эпир апат та кăшт нумайрах çиетпĕр. Çавăнпа ӳт хушасси те сисĕнет.

Кĕлетке яланхиллех яштака пултăр тесен вара иммунитета çирĕплетекен, пире ăшăтакан, витаминпа пуян апатçимĕç çиме тăрăшмалла.

Кĕркуннехи сивĕ çил ӳте те типĕтет, вăл кушăрхать, çуркаланать. Çак пăтăрмахран хăтăлас тесен витаминпа тата минералпа пуян апат, тĕслĕхрен, тĕрлĕ кĕрперен хатĕрленине, майăр, кăмпа, сĕт-çу, купăста çимелле.

Çуллă йышши тинĕс пулли (семга, форель, сардина, скумбри) ӳтри нӳрĕклĕхе сыхласа хăварĕ. Унта организма кирлĕ Омега-3 тата Омега-6 çу кислотисем çителĕклĕ. Шыв та нумай ĕçĕр, анчах ăшшине çеç.

Типĕ ӳслĕк аптăратсан сĕт-çуран хатĕрленĕ апат ытларах çимелле. Панулмипе груша нимĕрне, пĕçернĕ пахча çимĕçе те рациона кĕртсен аван.

Апата тутлăлатакан тĕрлĕ япалана ытларах ярсан та сывлăхшăн усăллă пулĕ. Лавр çулçи, тмин, имбирь, хĕрен, укроп, ыхра, пăрăç, сухан – çаксем пĕтĕмпех шăнса пăсăласран пулăшĕç. Çавăн пекех йӳçĕрех улма-çырла – апельсин, лимон, грейпфрут çимелле.

Кĕркунне кăмăлтуйăм та пусăрăнчăкрах. Тăтăшах ывăннă пек туятпăр хамăра. Кичемлĕхпе тунсăха сирме, вăйхал илме вĕри, ăшă апат, тĕрлĕ пăтă çини пулăшать. Чĕрĕ пахча çимĕçе вара (помидор, пылак пăрăç тата ыт. те) сахалтарах çимелле. Сивĕ шĕвек те ĕçмелле мар.

## Яштака пӳллĕ пулас килет-и?

Пире кашнинех хамăрта мĕн те пулин килĕшмест. Кĕлеткен çитменлĕхĕсем те (вĕсем пур пулсан) пăшăрхантараççĕ тепĕр чух. Хырăм кăштах пысăкрах пек туйăнать, урасем мăнтăр пек курăнаççĕ… Апла тăк ку пăтăрмахсенчен хăтăлма вăхăт. Çак темиçе хускануран кашнинех 5-10 хут тăвăр. Вĕсене пурнăçланă вăхăтра тарăннăн та лăпкăн сывлăр. Ку хăнăхтарусем пĕçĕсене, пилĕке тата хырăм мышцисене çирĕплетеççĕ, çинçелетеççĕ.

1. Алăсене çĕклесе ĕнсе хыçне хурăр, чавсасем айккинче. Чĕрне вĕççĕн тăрса пĕчĕк утăмсем тăвăр. Урасем хуçланмалла мар.

2. Урайне ларăр та сылтăм пĕçĕ çине таянăр. Сулахай урана хуçлатса сылтăмми урлă хурăр. Вăл урайне лекмелле. Сылтăммине хуçлатма юрамасть. Кайран тепĕр енне çаврăнса хăнăхтарăва тепĕр хут тăвăр. Çаврăннă чухне хул пуççисене тӳрĕ тытма тăрăшăр.

3. Çурăм çине выртăр. Алăсене айккинелле ярăр. Урасене хуçлатăр. Чĕр куççисене пĕрле тытăр. Урасене пĕрре сылтăм, тепре сулахай енне урайне антарăр.

4. Чĕркуççи çине тăрăр та алăсене малалла тăсăр. Сылтăм пĕçĕ çине куклене алăсене сулахай енне ярăр. Унтан алурана малтанхи пекех хурăр. Кайран хăнăхтарăва тепĕр хут, урăх еннелле тăвăр.

5. Урайне ларăр та чавсасемпе урайĕнчен тытăнăр. Урасене хуçлатăр та чĕр куççисене çамка патне илсе пырса лектерĕр. Çак хăнăхтарăва 10-15 хут тумалла.

6. Сулахай аяк çине выртса çав енчи алăпах урайĕнчен тытăнăр. Сылтăммине малалла тăсăр. Сылтăм урана хуçлатăр та сулахаййин çумне тытса çӳлелле шутарăр. Кайран хăнăхтарăва тепĕр енне çаврăнса тепĕр хут тăвăр.



● РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН




Хисеплĕ Наташа! Сана çак халăх мелĕпе хатĕрленĕ маскăпа усă курса пăхма сĕнетпĕр.

Хура çăкăрăн пĕрре тăватăмĕш пайне 6-8 сехетлĕхе шыва ярса хумалла. Çемçелнĕ çăкăра теркă витĕр кăларнă пĕр суханпа пăтратмалла. Пулнă хатĕрпе пуçа сĕрмелле. Целлофан хутаç тăхăнмалла, çиелтен ăшă тутăр çыхмалла. 3-4 сехетрен çуса ямалла. Çак процедурăна 10 кун тумалла. Ку маска çӳçе çирĕплетме, çăратма пулăшать.

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

# Аттепе аннешĕн эпĕ – ылтăн пĕрчи!



Урай сĕрме хушрĕç те кăмăл самантрах пăсăлчĕ. Пĕшкĕнес килмест манăн. Ĕнер Ванюш куккасен умĕнчи пилеш йывăççи çинчен ўксе çурăма ыраттартăм. Ăнсăртран сиксе тухнă инкекшĕн, паллах, хамах айăплă.

Тусăмпа ăмăртмалла хăпарса кайрăмăр та иксĕмĕр те ура шуса кайнăран çĕре лаплатрăмăр. Нинук сĕрлеттерсех макăрчĕ-ха, эпĕ ыратнине пĕрех чăтрăм.

– Урăхран ăссăрла ĕçсем тумастăр ĕнтĕ, – асăрхаттарчĕ Пире Ванюш кукка.

Эпир унпа килĕшсе пуçсене çеç сĕлтрĕмĕр. Ах, пилĕк тĕлтен те çĕтĕлмен çитменнине. Унпа вăл паян усă курмĕ тейĕпĕр, анчах тепĕр пилĕк çултан пурнăç мĕнле килсе тухассине никам та татса калаймĕ. Тен, шăпах çак кĕперен мĕн те пулин çĕлĕпĕр, – терĕ япалана хутаçа чикнĕ май.

Хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕм. Те пĕлсех калаçать вăл, те... Каллех верандăна васкарăм. Асанне те манран юлмарĕ.

– Кунти пĕр япалана та ан тыт. Пурте юрăхлăскерсем. Çак кофтăна шкул вĕренсе пĕтернĕ хыççăн эсĕ те тăхăнма пултарăн. Симĕс юбкуна аппун ачи килĕштерĕ акă. Хулăн шăлавара аçу кăшт начарлансан çийĕнчен те хывмĕ...

те унăн мăнукĕ, анчах вăл Мишăпа Сашăна ытларах юратнине чунпа туятăп. Асанне вĕсемшĕн тем тума та хатĕр.

Урай сĕрсе пĕтертĕм те хăнасемпе пĕрле диван çине вырнаçрăм. Арçын ачасем çаплах типмен урайĕнче алхасаççĕ. Çакăншăн эпĕ питех те пăшăрхантăм. Ара, ыран каллех урай сĕртереççĕ ĕнтĕ.

Чун ыратăвне лăплантарас тесе çывăрмалли пўлĕме кĕрсе выртас терĕм. Çак вăхăтра пуç çине тем япали ўкрĕ. Çаврăнса пăхрăм та... Сĕтел çине Миша хăпарса тăнă та авă манăн пуç çине кĕнеке пăрахнă.

– Сана, асар-писер ачана,

халĕ ĕнерхинчен те ытларах ыратать. Утнă чухне пушшех канăçсăрлантарать. Кунĕпе манăн канфет çеç çисе лармалла та. Ĕç хушрĕç авă.

Пĕчĕк витрепе шыв ăсса кĕтĕм, анчах пўртре мунчала тупаймарăм. Тухрăм верандăна ăшталанса. Каштара мĕн чухлĕ япала! Аннен кĕпине илсе пўлĕме васкарăм. Ăна витрене чикме хатĕрленнĕ вăхăтра асанне алăран кап! ярса илчĕ.

– Чим-ха, чипер япалана мĕншĕн юрăхсăра кăларатăн? – терĕ вăл кăшт сассине хăпартса.

– Анне тăхăнмасть-çке.

– Кам каларĕ? Кĕпе нихăш

– Ăнланмастăп, мĕншĕн вĕсене шифоньера хуман?

– Атя, нумай ан калаç, – тесе асанне алăран çавăтрĕ.

Пўрте кĕрсен вăл мана тутăр тупса пачĕ. Çўхескер урайне пачах та типĕтмест. Нушаланса пĕтрĕм.

Шăп çак вăхăтра алăк уçăлчĕ те пўрте аттен йăмăкĕ ачисемпе кĕрсе тăчĕ. Мишăпа Саша асаннене курсан хывăнмасăрах ун патнелле чупрĕç.

– Чимĕр-ха, урай типмен! – асăрхаттартăм хайхискерсене манăн ĕçе хисеплеменрен.

– Ачам, хăнасене апла каламалла мар, – терĕ асанне пўрнипе юнаса.

Сăмахĕсем кўрентерчĕç. Эпĕ урама кăларса яратăп, – терĕм ыратнă вырăна сăтăркаласа.

– Ах, ун пек ан хăрат пĕчĕкскере. Вĕсемпе хальлĕхе ăшшăн çеç пуплемелле, – асăрхаттарчĕ мана каллех асанне.

Кўрентĕм! Хурланнăран куççуль те тухрĕ. Йывăç çинчен ўксе те кунашкал макăрманччĕ.

Тĕлĕрсе кăна кайнăччĕ. Çурăм çине Миша хăпарса кайрĕ те тăрăст! сикрĕ.

– Ай, пилĕк-е-е! – хыттăн кăшкăрса ятăм ыратнăран.

Хаваслă Миша хăранипе урайне анса тарчĕ те макăрса ячĕ.

– Анне-е-е! – терĕ вăл ĕсĕклесе.

Мĕн тетĕр! Айăпли каллех эпĕ пулса юлтăм.

– Миша санăн пилĕкне хуçса пăрахатчĕ-ши вара? Мĕн тесе кăшкăрмалла пулчĕ-ши санăн ăна, – терĕ аттен йăмăкĕ те кăмăлсăррăн.

Асанне чупса пырса Сашăпа Мишăна йăтса илчĕ. Хайхискерсене çупăрларĕ, юратрĕ.

– Эсир маттурккасем. Аппăрпа вылясшăн, вăл пур çавна ăнланмасть, – хушша-хуппа кĕчĕ сасартăк вăл.

Миша çаплах макăрать. Ăна лăплантарас тесе асанне юрă та шăрантарчĕ. Сăвă та каларĕ. Юмах вуласа парасшăнччĕ те, кĕнекене пĕчĕкскер таçта çити ывăтса ячĕ.

Тĕлĕнсе каймалла, Саша авă питĕ лăпкăскер. Кăмака çинчен ўксен те куççуль кăлармасть ахăртнех. Пĕр тăвансен кăмăлĕ-сем пачах расна иккен.

Миша ĕсĕклет-ха, унăн сасси йăлăхтарчĕ çаплипех. Ара, çирĕм минут та иртрĕ пуль макăрма пуçланăранпа. Вăл вара чарăнма та шухăшламасть вĕт!

– Ан макăр, тархасшăн, Миша. Кур-ха, ларать лăпкăн Саша, – тесе йăпатма тытăнчĕ хайхискере асанне.

Э, юрĕ-çке! Вĕсем юратманшăн мĕн кулянмалли пур! Чи кирли – эпĕ аттепе аннешĕн ылтăн пĕрчи пекех. Çакă паха та.



© Инна ПАДЕНЬКОВА (Вăрмар районĕ, Кĕлкеш) ўкерчĕкĕсем.

# Пыл тути

Каçхине аннепе кўршĕсенчен пĕр банка пыл туянса каçрăмăр. Çывăрас умĕн вара пурте тутлă чей ĕçрĕмĕр.

– Пыла тĕп сакайне лартатăп. Хĕл кунĕнче чирлесен питех те кирлĕ. Çавăнпа хальлĕхе пыл пирки пуçĕпех манăпăр, – терĕ анне.

Тепĕр кунне килте пĕччен юлтăм. Хутпа кăранташ илсе сĕтел хушшине вырнаçрăм та хĕвел ўкерме тытăнтăм. Ара, унсăр урамра питех те тунсăхçке. Сивĕ.

Кантăкран такам шакканăран пуçа ялтах çĕклерĕм. Ванюк иккен! Вылямя чĕнет ахăртнех. Хăпăл-хапăл тăхăнтăм та ун патне чупса тухрăм.

– Атя-ха пирĕн пата. Хырăм выçнă манăн. Çăкăр касма пĕлейменрен санран пулăшу ыйтас терĕм, – шăппăн калаçрĕ вăл сак çине ларнă май.

– Хуçса çиме пулать-çке ăна, – терĕм аптăранă енне.

– Э-э-э! Апла хăтлансан атте вăрçать, – мăкăртатрĕ вăл каллех çамкине сăтăркаласа.

Уттартăмăр Андреевсен патне. Пўрте кĕрсен тўрех Ванюка çăкăр касса патăм. Вăл ăна шывпа йĕпетрĕ, ун çине сахăр сапрĕ.

– Епле тутлă! – тесе çиме те тытăнчĕ.

Вăл çапла каланăран хырăм çатăр-р! выçса кайрĕ.

– Мана хăналас теместĕн-им? – терĕм хăюсăррăн.

– Тархасшăн, – хирĕçлемерĕ Ванюк.

Савăтра сахăр пĕтнĕ иккен. Пылакпа тутанса пăхас килетчĕ те çăкăра...

Э, чим! Пыл пурччĕ-çке! Килте никам та çук чухне ăна мĕнма тутанас мар?

Тусăмпа чуптартăмăр пирĕн пата. Тĕп сакайĕнчи тулли савăта аран çĕклесе кăлартăмăр та сĕтел çине лартрăмăр. Пыла кашăкпа ăса-ăса çăвар тулли çиме тытăнтăмăр.

– Лисук, мĕн япали ку? Канфет-пĕремĕкрен те тутлă япала, – тесе Ванюк сĕтел çинех хăпарса ларчĕ.

– Пыл терĕç килтисем. Анчах вăл епле майпа пулнине калама пултараймастăп, – ăнлантартăм хайхискерне.

Çур сехетрен урама тухрăмăр. Паллах, пыла та хамăртан хăвармарăмăр. Ăна пахчари катка çумне пытартăмăр. Ара, кĕçех шкултан аппасемпе пиччесем таврăнмалла-çке. Вĕсем çак пылак кучченеçе курсан туртса илесçĕç.

Ванюк таçтан юлташĕсене тупса килчĕ. Ман умра пилĕк ача!

– Лисук, пире, тархасшăн, пыл çитерсем. Питĕ хырăм выçнă, – тилмĕрчĕç пĕр харăссăн.

Вĕсен сăмахĕсене илтсен хăраса кайрăм. Аптăранă енне виçĕ утăм каялла чакрăм та... вĕлтĕрен ăшне кĕрсе ўкрĕм. Мĕнле сиксе тăнине ас тумастăп. Ниçта кайса кĕрейменнипе тытăнтăм хыçкаланма! Çитменнине пĕр вырăнта тăраймастăп. Акă çан-çурăм вĕтелеме пăрахрĕ. Кур-ха эсĕ! Ванюкпа тусĕсем пыл савăтне сĕтел çине лартнă та пĕр сывлайми çиеççĕ. Хăйсем шутсăр хыпаланаççĕ.

Çак ўкерчĕке курсан хытă тарăхрăм. Ара, пылĕ çурри ытла пĕтнĕ-çке. Савăта хăпăл-хапăл туртса илтĕм те килелле вĕçтертĕм. Турра шĕкĕр! Пўртре никам та çук. Вара васкаса тĕп сакайне антăм та кĕленчене вырăнне лартрăм.

Паян мĕн хăтланнине анне пĕлес пулсан мана пуçран ачашламĕç. Çавăнпа та айăпа тўрех йышăнмалла ахăртнех.

Каланă-тунă. Çырма урлă каçма аванах пултăр тесе атă тăхăнтăм та ферма еннелле анне патне чупрăм.

# Хаваслă 2014 самант

## «Хĕвел çаврăнăш»

### сăмах касмăш



**1-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Тутарстанра 1928-1931 çулсенче чăвашла тухса тăнă журнал. 5. Çамрăк вăрман. 6. Пысăк вĕçен кайăк. 7. Чилири паллă юрăç тата композитор.

**Аялалла:** 1. Юрий Скворцов çырнă «... хурăнĕ» повеç. 2. Килти выльăх. 3. Шывра пурăнакан чĕр чун. 4. Вырăс юмахĕнчи хĕр ача.

**2-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла:** 1. ...ран аслă пулаймăн (ват.сăм.). 5. Тĕш-тырă. 6. ... çанталăк. 7. Исландири вулкансен ушкăнĕ.

**Аялалла:** 1. Тĕнчери чи вăрăм юхан шывсенчен пĕри. 2. Кушак йăхне кĕрекен чĕр чун. 3. Пӳрт-çурт пайĕ. 4. Вĕçен кайăк.

**3-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла**: 1. П.Осипов драми. 6. Попугай тĕсĕ. 7. Африкăри пуш хир. 8. Спорт вăййинчи пĕр тапхăр. 9. Спорт хатĕрĕ.

**Аялалла:** 1. Гренландири утрав. 2. Пӳрт-çурт пĕрени. 3. Хĕвел тухăçĕнчи тата çурçĕрти вĕрӳçĕ. 4. Чилири хула тата тинĕс порчĕ. 5. Марокко тĕп хули.

**4-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла:** 1. А.Кăлкан пьеси. 5. Иркутск облаçĕнчи хула. 6. Çывăх Хĕвел тухăçĕнчи çĕр-шыв. 7. П.Хусанкай поэми.

**Аялалла:** 1. Хими элеменчĕ. 2. Перу тĕп хули. 3. Инçет Хĕвел тухăçĕнчи Дальнереченск хулин малтанхи ячĕ. 4. Хĕр ача ячĕ.

**5-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Кайăк пĕрчĕн сăхсах ... пулать (ват.сăм.). 5. Çăнăх алланă чухнехи виçе. 6. Литература хайлавĕ. 7. Çĕпĕрти юхан шыв.

**Аялалла:** 1. ... курăк (чистец). 2. Ĕне апачĕ. 3. Чăваш чĕлхинчи падеж. 4. ... пĕлĕт.

**6-мĕш сăмах касмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Казахстан, Кăркăстан халăх юрăçи. 5. ... Кузьмина (СССР халăх артистки, Чăваш патшалăх академи драма театрĕ). 6. Мавританири хула. 7. Я.Ухсай поэми.

**Аялалла:** 1. Иртнĕ вăхăт. 2. Хаклă йышши пулă. 3. ... çăкăр. 4. Японин пĕрремĕш тĕп хули.

## Тĕп хула – çĕр-шыв

### пуç ватмăш

1



2



3



**Виçĕ пуç ватмăша та пĕр йĕркепе шутламалла. Пĕрремĕш юпара – çĕр-шыв тĕп хули. Вĕçĕнче – çĕр-шыв ячĕ. Хуравсене тĕрĕс тупас тесен, сылтăмалла çырса клеткăсене сăмахсемпе тултармалла.**

**1-мĕш пуç ватмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Çут çанталăкри палăк тумалли чул. 2. Патăрьел районĕнчи ял. 3. Пулă тытмалли хатĕр (диалект). 4. Ĕç хатĕрĕ. 5. Атте ашшĕ. 6. Атăл юхма пуçланакан тăрăх.

**2-мĕш пуç ватмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Раççейĕн çурçĕр пайĕнчи хули. 2. Хĕветĕр Уяр романĕ. 3. Металл. 4. Турци тĕп хули. 5. СССРти космос карапĕ. 6. Енисей юппи.

**3-мĕш пуç ватмăш**

**Сылтăмалла:** 1. Вăрманти тата уй-хирти çăткăн чĕр чун. 2. Аргентинăпа Бразили чиккинчи шыв сикки. 3. Куба тĕп хули. 4. Алтай тăрăхĕнчи республика тĕп хули. 5. ... Агаков, ... Родионов, ... Ильин. 6. Чăваш журналистки.

## Сăмах касмăш тата ваттисен сăмахĕ



**Сылтăмала:** 5. Куславкка, Красноармейски, Йĕпреç районĕсенчи ял. 6. Пуш хирти хăйăр çинче ӳсекен тĕм е йывăç. 8. Хăвăрт утас енĕпе тĕнчипе палăрнă чăваш спортсменĕ, XXVII Олимп вăййисен призерĕ. 11. Ӳнерçĕ картина ӳкернĕ чух усă куракан хатĕр. 12. Çăткăн пулă. 14. Шупашкарти производство пĕрлешĕвĕ. 15. Чăваш халăх поэчĕ. 19. Туйăм. 20. Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрваш ялĕнче çуралнă паллă скульптор. 22. Çăткăн вĕçен кайăк. 23. Раççейри паллă футбол тренерĕ. 24. Слива сорчĕ.

**Аялалла:** 1. Йытăсене ĕрчетес тата вĕрентес енĕпе ĕçлекен специалист. 2. Математикăра усă куракан прибор. 3. Буг юхан шыв юппи. 4. Атăл çинчи хула. 7. Кушак йăхне кĕрекен, туллă-сăртлă тăрăхра пурăнакан чĕр чун. 9. Пысăк музыка коллективĕ. 10. Тухтăр. 13. Елчĕк районĕнчи ял. 16. Кайăк кăвакал. 17. Чăваш писателĕ, «Летчиксем» роман авторĕ. 18. «Челюскин» пăрахута çăлма хутшăннă летчик, Совет Союзĕн Геройĕ. 21. М.Горький çырнă «На дне» пьесинчи сăнар.

***Асăрхаттарни:*** **Паллă тунă клеткăсенчи сас паллисене стрелкăсем кăтартнă май, юпана çырса тултарăр. Тĕрĕс хуравсем тупсан, юпара ваттисен сăмахĕ вуланĕ.**

*Юрий* **ФРОЛОВ** (Шупашкар) *хатĕрленĕ.*